Шупашкар район хаҫачӗ ❋ 1932 ҫулхи июлӗн 27-мӗшӗнче тухма пуҫланӑ

# ТӐВАН ЕН

13 (9003) № ❋ 2005 ҫулхи февралӗн (нарӑс уйӑхӗн) 9-мӗшӗ. Юн кун ❋ Хакӗ ирӗклӗ

## СУМЛӐ ТӲПЕ ХЫВАҪҪӖ

**Пӗчӗк предпринимательлӗх пурнӑҫра ытларах та ытларах вырӑн йышӑнать, унӑн пӗлтерӗшӗ ҫулсерен ӳссе пырать. Вак бизнес экономикӑна аталантармалли пысӑк резерв пулса тӑчӗ. Ҫак юхӑма пирӗн районта ҫул парассипе мӗнлерех тимлеҫҫӗ-ха, экономикӑри унӑн тӑрӑмӗ епле? Ыйтусем ҫине район администрацийӗн экономика пайӗпе пурлӑх управленийӗн специалисчӗ Т.Ф.ВЯТКИНА хуравлать.**

- Ҫулсерен районӑн экономика аталанӑвне предпринимательсем сумлӑ тӳпе хываҫҫӗ. Паянхи кун тӗлне пирӗн 255 пӗчӗк предприяти ӗҫлет. Вӗсенчен 32-шӗ фермер хуҫалӑхӗ. Унта 2010 ҫын вӑй хурать. Ӗҫлекенсен пӗтӗм пайӗн 21,4 проценчӗ пӗчӗк бизнесра тӑрӑшать. Ку кӑтартупа эпир республикӑра малти вырӑнта тӑратпӑр.

Иртнӗ ҫулта пӗчӗк предприятисем тавар кӑларассипе тата тӗрлӗ пулӑшу парассипе пурӗ 230,4 миллион тенке ҫитернӗ. Ку вӑл - 2003 ҫулхинчен 41,1 процент пысӑкрах. Уйрӑммӑн илсен кӑтартусем ҫакӑн пек: промышленность - 48,4 миллион тенкӗ, (2003 ҫулпа танлаштарсан ӳсӗм - 41,9 процент), строительство - 38 миллион тенкӗ (11,5 процент), ваккӑн тата курттӑмӑн сутассипе, обществӑлла апатлану - 144,3 миллион тенкӗ (49,6 процент).

Пӗлтӗр бизнесран бюджета 16 миллион тенкӗ налук пырса кӗнӗ.

Паянхи куна харпӑр хӑй тӗллӗн ӗҫлекен уйрӑм предпринимательсен йышӗ 1460 ҫынна ҫитнӗ. Танлаштарма: Ҫӗрпӳ районӗнче - 813, Муркашра - 481. Ку тӗлӗшпе эпир каллех малтисен ретӗнче.

Чылай предприятире хальхи кӑткӑс оборудовани, продукци паха́лӑхне лайӑхлатма пулӑшакан технологие ӗҫе кӗртнӗ. Техникӑна ҫӗнетни производство калӑпӑшне ӳстерме, ассортимента пуянлатма пулӑшать.

**- Татьяна Федоровна, каллех кал ӗҫлесе пыракан, производство хӑватлӑхне ӳстерекен пӗчӗк предприятисене уйрӑммӑн асӑнса хӑвармӑр-ши?**

- Малашлӑха ҫирӗппӗн утакан, пурнӑҫ таппипе пыракан предприятисенчен вӗренмелли, тӗслӗх илмелли пурах. Вӗсем: «Лит» ООО (ертӳҫи А.Леонтьев), «Новатор» ООО (А.Головин), «Паха тӗрӗ» ООО (П.Степанов), «Вега» ООО (Г.Яруткин), «Гранд» ООО (А. Груздев), «Экран» ООО(В.Игнатьев), «Колос» ООО (Г.Кудрявцев), «Шупашкарти мамӑк фабрики» АУО (В.Шайкин), «Вира Плюс» ООО (В.Кудрявцев), РСПМК -1" ООО (А.Илларионов) тата ыттисем.

**- Ҫӗнӗ юхӑма аталантарассипе район администрацийӗ иртнӗ ҫул нумай ӗҫ турӗ. Тӗплӗнрех чарӑнса тӑрас пулсан...**

- Пӗчӗк предприятире харпӑр хӑй ӗҫне усакансене аренда йӗркипе 3336,4 тӑваткал метр лаптӑк уйӑртӑмӑр. Ҫав шутран производство валли - 1596 тӑваткал метр, суту-илӳ валли - 687,3, йӑла ӗҫӗсемшӗн - 191,9 тӑваткал метр.

Суту-илӳ точкисен строительстви валли конкурссем ирттерсе пӗлтӗр пилӗк: Апашра - 2, Кӳкеҫре, Якутарпа Сатиркассинче пӗрер - ҫӗр участокӗ уйӑртӑмӑр.

Пӗчӗк предприятисемпе харпӑр хӑй тӗллӗн ӗҫлекенсем патшалӑх нушисем валли продукци парас тӗлӗшпе ҫулсеренех ирттерекен конкурса хутшӑнаҫҫӗ, ҫӗнтереҫҫӗ.

ЧР Президенчӗн халӑх хуҫалӑхӗсен организацийӗсенче ӗҫлекен кадрсене хатӗрлемелли программине пурнӑҫласа район администрацийӗ пӗлтӗр ҫичӗ ҫынна вӗренме янӑ. Ҫав шутран пӗчӗк предприятисенчен: «Паха тӗрӗ», «Недвижимость», «Сад».

Патшалӑх пӗчӗк предпринимательлӗхе укҫа-тенкӗпе сахал мар пулӑшать. Коммерци банкӗсем урлӑ процент ставкисене субсиди парать. Пӗтӗмӗшле илсен ҫак отрасле аталантарма пирӗн мӗн пур майсем ҫителӗклӗ, пуҫарулӑх ытларах пулни анчах кирлӗ.

**И.ВАСИЛЬЕВА.**

❂ Музей

## ЕНТЕШСЕНЕ ЕНТЕШСЕМ КУРАВПА ПАЛЛАШТАРАҪҪӖ

Районти музей ҫӗнӗ ҫурта куҫнӑранпа ҫулталӑк ҫеҫ ҫитрӗ-ха, апла пулин те аваллӑха кӑсӑкланакансем нумай куравпа паллашма пултарчӗҫ. Акӑ виҫӗм кун «Бичурин тата паянхи самана» музейра «Тӑван тавралӑх» тата «Чӑваш тумӗ: аваллӑхран - паянччен» ҫӗнӗ куравсен презентацийӗ иртрӗ. Ку выставкӑсем курма килекенсемшӗн декабрӗн 29-мӗшӗнчех уҫӑлнӑ. «Тӑван тавралӑхра» пирӗн районта ҫуралса ӳснӗ ӑстасен - РСФСР халӑх художникӗн В.И. Мешковӑн, Чӑваш Республикин халӑх художникӗн Ю.П.Матросовӑн, Чӑваш Республикин Дизайнерсен союзӗн председателӗн А.А.Астраханцевӑн, В.А.Андреев-Эткер художник-скульпторӑн тата ыттисен - ӗҫӗсемпе паллашма пулать.

«Чӑваш тумӗ: аваллӑхран - паянччен» курава вара пирӗн ентешӗн, Раҫҫейри естествӑлла наукӑсен академийӗн чӑн членӗн, «Оренбурггазпром» тӗп директорӗн, техника наукисен докторӗн В.В.Николаев профессорӑн; Чӑваш патшалӑх художество музейӗн уйрӑмӗн заведующийӗн, чӑваш халӑх костюмне тӗпчекен Г.И.Иванов-Орковӑн; Чӑваш патшалӑх гуманитари наукисен институчӗн сотрудникӗн, истори наукисен кандидачӗн В.П.Иванов доцентӑн ӗҫӗсемпе йӗркеленӗ. Вӗсем тури тата анатри чӑваш халӑхӗн костюмӗ 18-мӗш ӗмӗртен пуҫласа паянхи кунччен мӗнлерех пулнине кӑтартма тӑрӑшнӑ. Авторсем каланӑ тӑрӑх, ку курав пӗтӗмӗшле пирӗн республикӑра ӗҫлемен-ха, Йошкар-Олара, Пермьра вара пулнӑ. Шупашкар районӗ пӗрремӗш хут туллин ӗҫсемпе паллашма пултарать.

Презентацире район администрацийӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗ - социаллӑ хутлӗх пай ертӳҫи А.А.Константинов, кураври ӗҫсен авторӗсем пурте тухса каларӗҫ. Кӳкеҫри ача-пӑча искусство шкулӗнчи художество уйрӑмне ҫӳрекенсем сӑмах илекенсенчен нумай ҫӗнни, интереслине пӗлчӗҫ. Кӳкеҫри культура ҫурчӗ ҫумӗнчи «Юмансар» тата Ҫӗньялти «Ҫӗньял» фольклор коллективӗ мероприятие ертсе, илемлетсе пычӗҫ.

**А.СУСМЕТ.**



А.ПЕТРОВА фото ӳкерчӗкӗ.

❂ Презентацие хутшӑнакансем.

## ЙӐЛТАХ АСӐРХАНУСӐРЛӐХА ПУЛА

**Иртнӗ ҫул кил хуҫисем хӑйсем асӑрханулла пулманнипе тӗрлӗ пурлӑх кӗлленнӗ тата хӑйсен пурнӑҫӗ таталнӑ е вырлӑх-чӗрлӗх ҫунса кайнӑ тӗслӗхсем сахал мар пулчӗҫ. Вӗсене шута илсе вут-ҫулӑмпа пурин те асӑрханулларах пуласчӗ. Паян, хаҫат вулакансене иртнӗ ҫулхи темиҫе инкекпе ҫиелтен те пулин паллаштарсассӑн, урок пултӑрччӗ.**

Январӗн 10-мӗшӗнче Питтукассинчи Г.Ф.Андреев килӗнче ҫулӑмпа асӑрханулла пулманнипе пурӑнмалли ҫурт, килти пурлӑх юрӑхсӑра тухнӑ, кил хуҫин пурнӑҫӗ таталнӑ.

Июнӗн 10-мӗшӗнче Кипечкассинче пурӑнакан 77 ҫулхи К.И.Виноградов килӗнче электроприборпа тӗрӗс усӑ курманнипе ҫулӑм тухнӑ. Кунта та 10х10 метрлӑ пурӑнмалли пӳрт сиенленнӗ, чи хӑрушши вара - тӗтӗмре кил хуҫин 1991 ҫулхи мӑнукӗ чыхӑнса вилнӗ.

«Приволжское» вӗренӳ хуҫалӑхӗн автопаркӗнче ӗҫленӗ вӑхӑтра ӗҫ хӑрушсӑрлӑхӗн правилисене пӑхӑнманнипе бензин пӑсӗ хыпса илнӗ. А.В.Петров ӳчӗ пиҫсе кайнӑ.

Август уйӑхӗн 16-мӗшӗнче «Дубрава-1» коллективлӑ садра Ф.М.Тимофеев айӑпне пула пушар тухнӑ. Ҫавӑнта хуҫин икӗ хутлӑ дачи, кӳршӗн ҫурчӗ, пурлӑхӗ ҫунса кайнӑ. Ф.М.Тимофеевӑн пурнӑҫӗ те таталнӑ.

Шемшерти И.М.Кураков, Урай Макаҫри Л.Е.Егорова хуҫалӑхӗсенчи инкексем те асӑрханулла пулманнипех сиксе тухнӑ. Пурӑнмалли ҫурчӗсем тата пурлӑх пӗтнипе пӗрлех, шел пулин те, ҫулӑмра хӑйсем те ҫунса кайнӑ.

Ҫав сӑлтава пулах «Дружба» коллективлӑ садра кӑмакапа тӗрӗс усӑ курманнипе дача хуҫин ашшӗ 67 ҫулхи А.А.Немцев пурнӑҫӗ таталать.

Иртнӗ ҫулта районта 122 пушар тухнӑ. Ку малтанхи ҫулхинчен пилӗк пушар ытларах. Тӑкакӗ 3000638 тенкӗпе танлашать. Ҫулӑмра 6 ҫын пурнӑҫӗ таталнӑ, вӗсенчен пӗри - ача. 97 ҫурт кӗлленнӗ, 8 автотехника сиенленнӗ тата ытти те.

Сӑлтавӗсем - яланхи пекех хамӑрӑн асӑрханусӑрлӑха пула терӗмӗр. Ҫавӑнпа та вут-ҫулӑмпа ҫӑмӑлттайланни вырӑнсӑр.

**А.ПАВЛОВ,**
**пушар надзорӗн инспекторӗ.**

## ЭХ, МАТТУР ТА - ҪКЕ!

Февралӗн 5-мӗшӗнче Йӗпреҫре республикӑри Пенси службин районсенчи управленийӗсенче вӑй хуракансем йӗлтӗр ҫине тӑрса вӑй виҫнӗ. Ҫивӗч кӗрешӳре пирӗн район ӗҫченӗсем лайӑх результатсем кӑтартнӑ.

Районти пенси управленийӗн ертӳҫи А.М.Исаева хӑй икӗ километрлӑ дистанцире (хӗрарӑмсен дистанцийӗ) Канашсене 35 ҫеккунт выляса ярса финиша иккӗмӗш ҫитет. Виҫҫӗмӗшпе тӑваттӑмӗш вырӑнсене те пирӗн хӗрсем З.П.Яковлевапа Е.И.Иванова. Тепӗр участница - Т.И.Матвеева 12-мӗш вӑхӑт кӑтартнӑ.

Арҫынсем вара тата та сумлӑрах вырӑнсене йышӑннӑ. 3 километрлӑ дистанцире А.М.Андреев, Е.Н.Майоров, В.Г.Федоров чи ҫӳлти виҫӗ вырӑна ҫӗнсе илнӗ. А.И.Павлов ҫиччӗмӗш вӑхӑт кӑтартнӑ.

**П.ЧАШМА.**

## ПЫСӐК ПУХУ

Январӗн 31-мӗшӗнче Мӑн Маркари пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан шкулта ашшӗ-амӑшӗсен пухӑвӗ иртрӗ. Ку хутӗнче вӗсем чылайӑн пуҫтарӑнчӗҫ.

Пухӑ акӑлчан чӗлхипе вӗрентекен О.А.Полякова (вӑлах директорӑн вӗренӳпе воспитани енӗпе ӗҫлекен ҫумӗ) хатӗрленӗ концертпа пуҫланчӗ. Ӑна ҫиччӗмӗш класра вӗренекенсем шкул ҫинчен хывнӑ юрӑпа уҫрӗҫ. Пиллӗкмӗшӗсем, пӗрремӗш ҫул ҫеҫ ют чӗлхепе паллашнӑ пулсан та, ку тӗлӗшпе хӑйсен пултарулӑхӗпе тӗлӗнтерчӗҫ. Юрӑсем те юрларӗҫ, сӑвӑсене те палӑртуллӑ вуларӗҫ, ташшисем те килӗшуллӗ тухрӗҫ. Уйрӑмах «Виҫӗ упа» сценка лайӑх тухрӗ. Аслӑ классенче вӗренекенсен, паллах, номерӗсем кӑсӑкрах пулчӗҫ. Акӑлчан чӗлхине вӗсем пӗрремӗш ҫул ҫеҫ тӗпчемеҫҫӗ-ҫке. Кӗҫӗн классенче вӗренекенсене те айккинче хӑварман учительница. Юмахри пек принцесса тумӗсемпе "Пӗрре, иккӗ, виҫҫӗ,..." ятлӑ ташша кӑтартнӑ чух ашшӗ-амӑшӗсен пичӗсем ӑшӑ кулӑпа тулчӗҫ. Ольга Александровна хӑй те чӑтса тӑраймарӗ, урату ҫинчен акӑлчанла юрласа пачӗ.

Концерта музыка енчен Н.А.Андреев ертсе пычӗ. Сӑмах май, вӑл пӗтӗм шкул уявӗсене ирттернӗ ҫӗрте пулӑшма яланах хавас.

Концерт хыҫҫӑн пухӑ малалла тӑсӑлчӗ. О.А.Полякова доклад туса пачӗ. Вӑл аслӑ классенчи ачасен ҫивӗч ыйтӑвӗсем ҫинче чарӑнса тӑчӗ, вӗсене мӗнле татса памалли ҫулсем ҫинчен ӑнлантарса пачӗ.

Кайран шкул ӗҫӗсем ҫине куҫрӗҫ. Чи ҫивӗч ыйту - ачасене столовӑйӗнче вӗри апатпа тивӗҫтересси. «Пурнӑҫ темле йывӑр пулсан та ачасене кашни кунах апат ҫитермелле. Мӗншӗн тесен ачасен сывлӑхӗ - чи кирли. Кунта укҫа пуҫтармасӑр май пулмастех ӗнтӗ»,- терӗҫ вӗсем.

Юлашкинчен концерт пахалӑхне палӑртса пухӑннисем учительсене, уйрӑмах акӑлчан чӗлхине вӗрентекене ура ҫине тӑрсах тав ҫӑмӑхӗ каларӗҫ.

**Е.ГРИГОРЬЕВА, Мӑн Марка ялӗ.**

❂ Республика хыпарӗсем

### АССОРТИМЕНТА ПУЯНЛАТАҪҪӖ

Ҫӗнӗ Шупашкарти ҫӑкӑр завочӗ хӑй кӑларакан тавар ассортиментне пуянлатса пырать. Ҫӗнӗ продукцие укроп, сухан, сыр, хуратул кӗрпи, типӗтнӗ улма-ҫырла хушса пӗҫереҫҫӗ. Пылак апат-ҫимӗҫ те, ӑна ҫӑралтнӑ сӗтпе тата ыттипе пуянлатнине шутласан, тата тутлӑрах пулмалла.

### АГРАРИ ПАРТИЙӖ ХАҪАТ КӐЛАРАТЬ

Аграри партийӗн республикӑри уйрӑмӗ «Чӑваш ҫӗрӗ» хаҫат кӑларма пуҫланӑ. Унӑн пӗрремӗш номерӗ пичетленсе тухнӑ. Уйӑхне икӗ хут кун ҫути кӑтартма палӑртакан кӑларӑмра республикӑн агропромышленность секторӗ ҫинчен каласа пама палӑртаҫҫӗ, ялти пурнӑҫ епле аталанни пирки те ҫутатса тӑрӗҫ.

### НИМӖҪ СӐРИНЕ - ЧӐВАШРА

«САН Интербрю» АУОн Ҫӗнӗ Шупашкарти филиалӗ «Бекс» сӑра кӑларать. Тӗнче шайне тухнӑ, тӗрӗсрех пӗтӗм тӗнчери бренда ҫӗнсе илнӗ ҫак нимӗҫ сӑрине Раҫҫейре вӗретекенсем урӑх ҫук та.

«Бекса» 125 ытла ҫӗршывра сутаҫҫӗ-мӗн, кашни минутра вӑл ҫӗр ҫинче 3 пин кӗленче пушанать.

**В.ТИТОВА.**

## ДЕПУТАТ ЙЫШӐНУ ИРТТЕРЕТ

**Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗн Председателӗн ҫумӗ, патшалӑх строительстви тата вырӑнти самоуправлени комитечӗн председателӗ Генрих Геннадьевич ВАСИЛЬЕВ февралӗн 18-мӗшӗнче граждансене хӑйсен ыйтӑвӗсемпе йышӑнать:**

**Ҫӗньял ял администрацийӗнче - 10 сехетрен пуҫласа 12 сехетчен;**

**Шӑмӑш ял администрацийӗнче - 13 сехетрен пуҫласа 15 сехетчен.**

# УСĂЛЛĂ ÇУЛ ÇӲРЕВ

Ĕмĕртен пыракан йăлапа çынсем пĕр-пĕрин ăс-хакăлĕпе паллашса çывăхланаççĕ. Шупашкар районĕнчи культура вучахне упракансем сивĕ хĕл кунне пăхмасăрах инçе çула тухас терĕç. Унччен ял хуçалăх ĕçченĕсем Пенза облаçне çитсе курни çинчен хаçатра пĕлтернĕччĕ, çак тĕл пулусем, çыхăнусем малалла аталанасса шанăç çуратрĕç. Анчах та хальхинче культура ĕçченĕсем Пенза облаçĕнчи Беднодемьяновск районĕ йыхравланипе вырăс халăхĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллашма хапăл турĕç. Делегацие районти культура управленийĕн начальникĕ М.Павлова ертсе пычĕ. Ушкăнра Апаш ял администрацийĕн пуçлăхĕ В.Григорьев, Апаш культура çурчĕн заведующийĕ О. Ерилеева, районти культура çурчĕн илемлĕх ертӳçи И.Беспалова, методисчĕ Ф.Лукина, Чăваш Наци музейĕн директорĕ Э.Бахмисов, «Хыпар» хаçат журналисчĕ Н.Смирнова тата çак йĕркесен авторĕ пулчĕç.

Ăшпиллĕн кĕтсе илчĕç район пуçлăхĕнчен тытăнса ялти шкул ачи таранах чăвашсене çак çĕр çинче. Ял халăхне вырăнтах хăварасчĕ тесе нумай тăрăшаççĕ Пенза тăрăхĕнче. Кунта губернаторăн ятарлă программипе шкулсемпе культура учрежденийĕсене тивĕçлĕ тимлĕх кӳреççĕ. Устье, Кошелевка ялсенчи шкулсенче паянхи кун аталанăвĕ ыйтакан условисем пурте пур: компьютер класĕ те, спортзалĕ те, апатлану вырăнĕ те. Пĕринче 49 ача вĕренет, тепринче - 63 ача.

Эпир пулса курнă ялсенче йыш 400-600 çынран ытла мар. Анчах та халăх канăвне йĕркелесси малти вырăнта тăрать вĕсенче. Клубĕнче, ăшă та хăтлă çуртра, киноэкранпа илемлĕ фильмсем те пăхма пулать, тĕрлĕ музыка инструменчĕсемпе пултарулăха туптама май пур. Куракансен залĕсем çемçе пуканлă, ташă залĕнче тĕрлĕ тĕслĕ çутă выляса тăрать. Юнашарах вулавăшсем хăйсен пысăках мар кĕнеке фончĕпе, компьютерпа ксерокс аппарачĕпе тивĕçтереççĕ.

Беднодемьяновск хулинче пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан икĕ шкул, музыка, спорт шкулĕсем. Юрă-кĕвве вĕрентекенсем пире хăйсен «Суртасен суттинчи музыка каçне» чĕнчĕç. Асамлă кĕвĕ юхăмĕн ытамĕ пĕр-пĕрне пĕрремĕш хут тĕл пулнă çынсем пек мар, тахçанах туслă юлташсем пулнă пек туйтарчĕ. Шкулта ĕçлекен кашни педагог пултарулла ачасем вĕрентсе хатĕрлени куçкĕрет. Кунтан тухса кайсан та вĕсем ятарлă пĕлӳ илсе каялла таврăнаççĕ. Чăвашăн çемçе кĕввипе чипер ташшине кăмăллăн йышăнчĕç куракансем, хăйсем те чăвашла хусканса пăхрĕç.

Пуринчен ытла çак çул çӳревре Пенза облаçĕнчи Апаш ялне çитсе курас ĕмĕтлĕччĕ эпир. Апашсем хăйсем те пире кĕтнĕ иккен. Шкулти музейра пулса ял историйĕпе, унăн чапĕпе тĕплĕн паллаштарчĕç пире. Апаш - тăмран ăсталанă чӳлмексен, теттесен, шăхличсен тĕп çĕршывĕ. Кунта кашни килтех çак ăсталăх анлă сарăлнă. Килти чĕр чунсене, кайăксене, пăлансене тăмран чун витĕр кăларса ăсталанă. Ялта апат керамикин лабораторийĕ те ĕçлет. «Асли те, кĕçĕнни те кунта чунпа илемлĕхе, ырăлăха туйма пуçлать»- сăмахларĕ пирĕн ушкăна çак ăсталăха вĕрентнĕçемĕн кружок ертӳçи И.С.Калимулина. Чăвашри Апаш тăрăхĕ вара çитес вăхăтрах хăйсем патне çитсе курма йыхравларĕ, тĕнчипе паллă археологи палăкĕсемпе паллашма чĕнчĕ.

Хула тата район историйĕпе Пенза облаçĕн музей филиалĕнче - халăх пултарулăхĕн музейĕнче кăсăклантăмăр. Хула ячĕ Демьян Бедный вырăс поэчĕпе çыхăннă. Ăна хресченсем хисепленĕ, хăйсен Спасск хулине ун ячĕпе хывас тенĕ. Халĕ çак ята каялла тавăрас шухăшлă. Музейĕн пĕр пӳлĕмĕ апат керамикипе лăк тулли.

Чăннипех те тĕлĕнмелле тĕл пулусем.

Шел пулин те, вĕçленсе пычĕç. Анчах та çул çӳревĕн аса илĕвĕсемпе усăллă канашĕсем кунта çуралнă ĕмĕтсемпе шухăшсене кулленхи ĕçре пурнăçа кĕртме вăй-хăват парса тăрĕç.

**О.ПАВЛОВА.**

---

Республика хыпарĕсем

## ПИРĔН ХĂМЛА ЯПĂХ МАР

Пирĕн районта хăмлапа ятарласа ĕçлемеççĕха, анчах республикăра унпа çине тăракан предприятисем пур. Халĕ республикăра 8 сорт ӳстереççĕ. Иртнĕ çул 255 тонна пуçтарса илнĕ, ăна йăлтах сутнă. Пирĕн хăмлана пĕр вăхăтра тиркенине илткелеме тӳр килетчĕ те, халĕ хамăр продукципе кăштах мăнаçланма та юрать. Сăра вĕретекен «Букет Чувашии» фирма, акă, пĕлтĕр усă курнă хăмларан Чăваш Енре туса илни 70 процент йышăннă.

Çапах та çак отрасльпе малалла та ĕçлемеллине палăртнă иртнĕ çулхи ĕç-хĕле пĕтĕмлетнĕ май хăмлаçăсем. Хăмла лаптăкĕнчен çурри ытла ватăлнă. Ун пеккисем уйрăмах Элĕк, Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри, Шăмăршă, Елчĕк районĕсенче самай-мĕн.

**В.ИВАНОВА.**

## ГАЗ ПАРАССИНЕ ЧАКАРНĂ

Тулта сивĕ çанталăк тăнăран чылай хваттерсенче газпа ăшăтма хăтланаççĕ, уйрăм çуртсенче газ пусăмне вăйлатаççĕ. Çакă, паллах, «кăвак çулăм» дефицичĕ патне илсе пырать. Çавна май, ЧР Промышленность тата энергетика министерстви пĕлтернĕ тăрăх, газ парасси татти-сыпписĕр пурнăçлантăр тесе январĕн 28-мĕшĕнчен республикăра çут çанталăк газĕпе тивĕçтерессине чакараççĕ. Кун пирки «Межрегионгаз» ООО тата «Газпром» АУО предписани ярса панă. Унта çут çанталăк газĕпе усă куракан организацисемпе предприятисен май килнĕ таран перекетлĕрех пулмалла, ытти топливо ресурсĕсене хута ямалли çинчен асăрхаттарнă.

**И.ИРИДОВА.**

---

# СЫСНА ТЫТНИ УССИ ПУР-И?

Самана варкăшĕ улшăннă май кулленхи пурнăçри хăш-пĕр йĕркене пăрахăçлатпăр, çĕннĕлле ĕçлесе пăхатпăр. Тепĕр чух вара хăй вăхăтĕнче малашлăхсăр тесе тиркенĕ кивви патне те таврăнатпăр. Сысна отраслĕ пирки те çавна калама пулать-тĕр. Аслăраххисем республикăра тахăçан вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли пысăк комплекссем пулнине астăваççĕ ĕнтĕ. Анчах шухăшланипе шур пӳрт лартайман теççĕ те, çавăн пекех килсе тухнă: мăнаçлă комплекссем хупăннă, нумайăшĕ юрăхсăра тухнă. Халĕ Раççей ял хуçалăх министрĕ А.Гордеев каллех çав шухăша палăртнине пĕлетпĕр. Пысăк комплекссем тусан ытăва татса пама май килессе шанать вăл. Юрĕ, пурăнсан курăпăр. Халĕ хамăр районта сысна отраслĕ мĕнле аталанни пирки кăштах тишкерер-ха.

Пĕлтĕр Чăваш Енре сысна шучĕ 25,5 процент чакнă. «Хыпар» хаçат акă Сĕнтĕрвăрри районĕнчи ял хуçалăх предприятийĕсенче пурĕ те 119 пуç тăрса юлнине пĕлтерет. Канаш, Пăрачкав, Улатăр районĕсем сысна шутне çуррине яхăн чакарнă-мĕн. Пирĕн район ку отрасле тытса пырать-ха. Вылăх шучĕ 13 процент чакса 5474 пуç юлнă пулин те çура илесси, тĕслĕхрен, пĕлтĕр 4 процент ӳснĕ: 9619 пуçа çитнĕ. Пĕтĕмпе ӳт хушаслăх та лайăхланнă: 4066 тоннăпа танлашнă. 2003 çулта вăл 3719 тонна пулнă. Талăксерен самăрăланасси 231 грамран 279 грама çитнĕ.

Çапах та çак цифрăсем районти мĕн пур ял хуçалăх предприятийĕ сысна отраслĕне тикĕссĕн ĕçлеттерсе пынине пĕлтермест. Сысна шучĕ икĕ хуçалăхра кăна хушăннă. Ленин ячĕллĕ кооператив йыша 39 процент ӳстерсе 1416 пуçа çитернĕ, Свердлов ячĕллĕ колхоз 20 процент хушса çулталăка 518 пуçпа вĕçленĕ. Ыттисенче кашнинчех чакарнă. Çапах та сысна шутне пĕр процент, е 12 пуç, сахаллатнă «Приволжское» вĕренӳ хуçалăхне çав рете лартма хăюлăх çитмест. Мĕншĕн тесен кăçалхи январĕн пуçламăшĕ тĕлне унта 1400 пуç пулнă. Куйбышев ячĕллĕ кооперативра 416 пуç, «Искра» ЯХПКра 327 пуç хăварнă. «Атлашевский», Кадыков ячĕллĕ, «Слава», «Гвардеец» предприятисен 247-225 пуç юлнă. «Прогресс» акционерсен обществипе «Букет Чувашии» агрофирмăн Ишлейри филиалĕн йыш пĕр пекрех: 163 тата 161 пуç. «Атăл» çĕнĕ çула 98 пуçпа кĕнĕ, «Урачикский» - 41-пе. Чуракăксен йыш пысăк мар та, çапах вĕсем ăна упраса хăварма пултарнă теме пулать, мĕншĕн тесен унта иртнĕ çул 1 пуç кăна чакарнă. Йыша пĕлтĕр вуçех пĕтернисем те пур: Тăрăнсемпе Хыркассисем («ЧувашАгроМаркет» ЯХПК) пачах хăварман. Кунта асăнман хуçалăхсенче сысна вуçех çук.

Йыша чакарнишĕн хурлас тĕллев лартман эпĕ. Хуçалăха ертсе пыракансем мĕн усăллăраххипе мĕн тăкаклине хăйсем татса пама тивĕç. Çапах та çĕнĕлле ĕçлемелле тетпĕр те, килĕшес килет çавăнпа. Çитменнине, лайăх опыт саракансем пур. Тутар Республикинчи пĕр предприятире, унта пирĕн районсем кайса курнăччĕ, сыснасене ангарта тытаççĕ. Ытлашши тăкакланма та кирлĕ мар, хăйне евĕр технологие пăхăнса пыр кăна. «Приволжское» вĕренӳ хуçалăхĕн ертӳçи Г.И.Егоров пĕр канашлура хăй нумаях пулмасть Новосибирск облаçĕнчи вĕренӳ хуçалăхĕнче пулса курни çинчен каласа кăтартни аса килчĕ тата. Пăрусене сивĕре тытаççĕ-мĕн. Апат пахалăхне те урăхларах тĕрĕслеççĕ иккен унта. Лайăх тĕпчесе ăнланнă хыççăн ырă енсене пурнăçа кĕртме пулать. Шыра, ан ӳркен кăна.

Пур ун пек хастарсем. Районтах. Сысна ĕрчетме вĕренсе пыни, тĕслĕхрен, самаях сисĕнет. Пуçламăш утăма «Приволжское» вĕренӳ хуçалăхĕ турĕ те, Свердлов ячĕллĕ колхозпа Ленин ячĕллĕ кооператив та майĕпен ун ретне тăчĕç. Шăпах çав хуçалăхсем районăн сысна отраслĕне малалла туртса пыраççĕ тесен те паян ытлашши пулас çук. Вĕсенче рациона урăхла йĕркелеççĕ. Типĕ апат тата шыв. Анчах ахаль комбикорм мар çав, ăна белокпа витамин-минерал ярса пуянлатаççĕ. Кашни ӳсĕмрин - хăйĕн виçи. Ăна çирĕп асăрхаса тăмалла. Çавăн пек тăрантарма пуçланă хыççăн, ветеринарипе санитари норми çинчен каламасăрах паллă, сыснасен самăрланасси лайăхланнă. «Приволжское» вĕренӳ хуçалăхĕ иртнĕ çула сыснасем талăксерен 547 грамм ӳт хушнипе вĕçленĕ, Ленин ячĕллĕ кооператив - 394 грампа. Районĕпе туса илнĕ сысна какайĕнчен 47 проценчĕ вĕсен тӳпи, 22 проценчĕ - Апашсен, 10 проценчĕ- Шорчекассисен. Ленин ячĕллĕ кооператив сысна шутне кăçал тата ӳстересшĕн.

**В.ЭВЕРККИ.**

---

# ЮХАТЬ-И ТЕ ЮХМАСТЬ-И?

Юхать çав. Сăмах мĕн пирки пынине вулакан тӳрех ăнкарса илĕ. Аншарли теççĕ ăна халăхра. Хăшĕсем вара ăна хăйсем валли мар, суткаса укçа тăвас тĕллевпе кăлараççĕ-çке. Сутма тунă ялпа пахалăхĕпе питĕ лайăх тетĕр-и? Çук...Ăна пула нумай çыннăн организмĕ наркăмăшланать. Çавăнпа та район администраци çумĕнче ĕçлекен ятарлă комиссии çакăн пек сутăçсене тăрă шыв çине кăларса пырать.

Иртнĕ ларура комиссия алăранах ярса илнĕ темиçе сутуçăн ĕçне пăхса тухрĕ. Лакăр ял ĕнче пурăнакан Л.А. Александрова хăй йăнăшне ăнланасшăн пулман, пынисемпе тӳрккес калаçнă. Кӳкеçри С.А.Никонорова та пысăк айăпа кĕнĕ темелле. Вăл çул çитмен, вĕренекен çамрăксене пуçа минретекен шĕвек сутнă, вĕсене «ырă» тунă.

Çакăн пек тĕслĕхсем района тупăнсах тăраççĕ-çке. Хамăрах эрех ĕçсе лартнă йĕркесĕр çын çине йĕрĕнсе пăхатпăр. Анчах та укçашăн лайăххине сирсе усаллине çиеле кăларатпăр.

Çак кун комисси ĕçченĕсем килте харкашу кăларнă темиçе ĕçе те пăхса тухрĕç.

- Ӳсĕр пулнă, аступмастăп, урăх ун пек пулмăп,- теççĕ айăпа кĕнисем. Çапах та ĕçе мĕншĕн-ха çавăн пекех çиеле кăлармалла. Вăйпа мухтанни нихăçан та ырри патне илсе пыманнине манас марччĕ.

**П.ПАВЛОВ.**

---

# ПРЕЗИДЕНТ СТИПЕНДИНЕ ТИВĔÇНĔ

Кулленхи ĕçре лайăх кăтартусем тунăшăн, тивĕçе çӳллĕ шайра пурнăçласа пынăшăн пирĕн районти чылай ĕçчен ЧР Президенчĕн стипендине тивĕçнĕ. Кун пирки хаçатăн иртнĕ номерĕнче те çырнăччĕ. Стипендие тивĕçнисем хушшинче тата çак ятсем пур

**Ирина Владимировна КОЖУХОВА** - "Кӳкеçри лицей" муниципаллă вĕренӳ учрежденийĕн аслă вожатăйĕ;

**Татьяна Валерьевна МОКИНА** тата **Максим Петрович ФЕДОРОВ** - "Кӳкеçри ача-пăча искусствисен шкулĕ" ачасене хушма пĕлӳ паракан муниципаллă вĕренӳ учрежденийĕн преподавателĕсем;

**Ольга Александровна ОРЛОВА** - "Кӳкеçри издательство çурчĕ" патшалăх унитарлă предприятин тĕп бухгалтер çумĕ;

**Андрей Вадимович ПАТРИ** - "Чăваш патшалăх академи юрăпа ташă ансамблĕ" патшалăх культура вĕренӳ учрежденийĕн балет артисчĕ;

**Екатерина Алексеевна ТАБАКОВА**- "Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕ" аслă профессиллĕ пĕлӳ паракан федераллă патшалăх пĕлӳ учрежденийĕн пĕрремĕш курс студентки.

---

Шкул хыпарĕ

# ÇАМРĂК МАТЕМАТИКСЕН ЭРНИ

Кашни уйăхрах вăл е ку предметпа тĕрлĕ уяв иртет пирĕн шкулта. Анчахрах нарăс уйăхĕнче пурнăçланнă 10-9-мĕш класра вĕренекенсем математика эрнине хутшăнчĕç.

Кашни класс тĕрлĕ тĕслĕ, пуян содержаниллĕ «Çамрăк математик», «Асамлă математика», «Хирĕçле задачăсем» стена хаçачĕсем кăларчĕç. Çиччĕмĕшсем икĕ ушкăна пайланса «Чукун çул» вăйă ирттерчĕç. Тĕрлĕ «станцисенче» примерсем, задачăсем, сăмахкăçмăшсем шутларĕç, астуса юлассине вăйлатмалли ыйтусем çине хуравларĕç, геометри фигурисене тĕрĕс ӳкерессипе ăмăртрĕç.

Пиллĕкмĕшсен конкурсĕ «Математик - бизнесмен» ятлă. Хальхи лару-тăрупа çыхăннă тĕрлĕ ыйту çине интереслĕ хуравсем пулчĕç математиксен.

Саккăрмĕшсем хăйсен пĕлĕвне «Телейлĕ самантра» кăтартрĕç. Кунта пуç çавăрмалли пайтах пулчĕ. Тăххăрмĕшсем «Математика çĕршывĕнчи мыскарасем» юмахра выляса кăтартрĕç, куракансене те савăнтарчĕç.

Юлашкинчен пурте уяв каçне пуçтарăнчĕç. Асамлă çĕрĕ, вирсĕр открытка, Мебиус лист вăрттăнлăхĕ çинчен А.И.Степанова вĕрентекен тĕплĕн ăнлантарса пачĕ.

Ачасем ваттисен сăмахĕсене (ăçта число) аса илчĕç. 5, 7, 8 вĕренекенсем сăвă-юрăсемпе, шӳткалавсемпе, кулăшла сценкăсемпе тĕлĕнтерчĕç.

13 число çинчен халăхра тем те пĕр каланин хирĕçлевне итлерĕç, тимлĕхе тĕрĕслерĕç.

Уйрăмах палăрнисене: Настя Викторовна, Устя Васильевана (5 кл.), Кристина Филлипповна, Таня Никитинана (7 кл.), Андрей Федорова (8 кл.) парнесемпе чысларĕç.

**А.ЕФИМОВА.**

---

# «МАРШРУТКĂНА» ЫТЛАРАХ КĂМĂЛЛАÇÇĔ

Юлашки çулсенче çула тухасси чылай çăмăлланчĕ. Палăртнă вăхăтпа çеç çӳрекен автобуса кĕтсе тăрас, билет çукран шикленес тата ирĕксĕртен тулли салонра хĕсĕнсе пырас йывăрлăхсенчен тинех хăтăлтăмăр. Уйрăм хуçа тытса тăракан автотранспорт йышланнине кура çĕнĕ маршрутсем уçăлчĕç, вĕсем умлă-хыçлăн çула тухаççĕ. Халăх, паллах, хăтлă транспорта кăмăллать.

Чăваш Енри пысăк тата вăтам автотранспорт предприятийĕсем иртнĕ çултăлăкра 220 миллион пассажира турттарнă. Çакă 2003 çултинчен 9,1 процент сахалрах. Çав вăхăтра «маршруткăпа» усă куракансен йышĕ пĕлтĕр малтанхи çулхипе танлаштарсан 2,7 хут ӳснĕ.

**И.ВАСИЛЬЕВА.**

# ТĂВАН ТАВРАЛĂХ

❂ Кăçал - Садсемпе парксен çулталăкĕ

## ПУРИНЧЕН ТЕ КИЛЕТ

Хамăн тăван ялăма, Янăш ял администрацине кĕрекен Праньккана, ытарайми илемĕшĕн яланах чунтан юратнă эпĕ. Тĕрлĕ çĕре çитме тӳр килнĕ май унти вырăнсене, ял урамĕсене хамăрăннипе танлаштараттăм. Çук, курак хăйĕн чĕппи пирки хура пулсан та хамăнах тесе каланишĕн мар. Ытти хăш-пĕр ялти пек урамра строительство материалĕнчен пуçласа вут-шанкă таран капашсăр купаланса выртмастчĕ. Пурăнакан çын унсăр мар-ха ĕнтĕ. Анчах пурри пĕр-пĕр вăрттăн кĕтесре илемлĕн вырăн тупнă. Чăннипех те ем-ешĕлччĕ тăван ялăм.



Çапла, иртрĕ вăхăтра каланине тĕрĕсех асăрхарĕ вулакан. Сипсимĕс курăклă урампа мухтанаймасть паян тăван ялăм. Çуркуннепе кĕркунне тăм çăралать. Яла газ кĕртнĕ хыççăн çавăн пек тăрса юлчĕ вăл. Пирĕн патра кăна мар ĕнтĕ, ыттисенче те ун пекех-тĕр. Çавăнпа та республика Президенчĕ кăçалхи çула Садсемпе парксен çулĕ тесе Указ йышăнни питĕ вырăнлă тесе шухăшлатăп. Альтруист туйăмлисем ахаль те йывăç-тĕм лартаççĕ-ха, нимĕнле çула пăхмасăрах. Хамăр кӳршĕрех пур ун пек хастар. Халь ялăма вĕçĕмех кайса çӳреместĕп те пĕлместĕп, анчах эпир ачарах чухне Леонид Пушков çуркунне вĕçĕмех йăмра лартатчĕ. Çулла выльăхчĕрлĕх кăшласран йывăç тавралла пĕчĕк карта евĕр çаваратчĕ. Анчах ун пеккисем йышлах мар.

Маларах асăннă Указа пурнăçласа кăçал урамсене тирпей-илем кӳрессипе ятарласа ĕçлессе шанас килет. Хăш-пĕр ял администрацийĕсенче çав ĕçе кĕркуннех пуçланă. Районта 12 пине яхăн йывăç-тĕм лартнă. Ку енĕпе ятарласа субботник та пĕрре кăна мар йĕркеленĕ. Йывăç лартассине Апаш, Лапсар, Ишек, Толик-Хураски, Ишлей ял тата Кӳкеç поселок администрацийĕсем япăх мар йĕркеленĕ. Техника инвентаризацийĕн бюровĕ, «Чувашское» ПКТБ, районти тĕп больница та кĕркуннех ĕçе пуçланă. Такам хушасса-кĕтартасса кĕтмен вĕсем, хăйсем тĕллĕнех ырă пуçару тунă.

Çĕньял ял администрацийĕн пуçлăхĕ Юрий Долгов кăçал çуркунне Çĕньялта аллея тума палăртнине пĕлтерет. Вăл Тăван çĕршывăн аслă вăрçине хутшăннисене асăнса лартнă палăк патне пырĕ. Ыттисем те хастар пулаççех пуль.

## КАШНИН ТИВĔÇĔ

**Тăван тавралăха сыхласси, унăн пуянлăхне упрасси кашнин тивĕçĕ. Район шайĕнче çак енĕпе мĕнле ĕçлеççĕ-ха? Ку ыйту тавра эпир «Районăн экологи хăрушсăрлăхĕн комитечĕ» муниципаллă учреждени ертӳçипе Р.В.Даниловпа калаçатпăр.**

- Тăван тавралăха сыхлассి çинчен саккуна пурнăçласа иртнĕ çул тĕрлĕ бюджетран тата предприятисен шучĕпе 12 миллион тенкĕ тăкакланă, - терĕ Ростислав Васильевич. - Пысăк калăпăшлă тата пĕлтерĕшлĕ ĕçсем пĕрре кăна мар иртнерĕ. Районшăн паллă объект вăл - Çавал юхан шывĕн çулне тӳрлетесси, тĕрĕсрех, хăйĕн малтанхи вырăнне тавăрасси. Вăл енĕпе пĕлтĕр 4,5 миллион тенкĕ ытла тухса кайнă. Кăçал тата 6,5 миллион тенкĕлĕх ĕç тумалла.

**- Çавăн чухлĕ тăкакланcах çула кĕскетни мĕн тума кирлĕ тесен?..**

- Çавал юхан шывĕ Юртукасси ялĕ çинелле çулсерен ытларах та ытларах çывхарса пынă. Çакă çынсене самай шиклентернĕ: çурт-йĕр ишĕлесси кама хăратмĕ ĕнтĕ?

- **Кӳкеçре те сехре хăппи пур. Анчах вăл юхан шывпа çыхăнман, çапах та çĕр йăтăннине пĕлетпĕр.**

- Райцентрти Икковски текен урамра пулса иртет вăл. Çĕр пĕлтĕрхи апрелĕн 15-мĕшĕнче хускалнă. Пĕчĕк лаптăк та мар: 2,5 гектара яхăн. Çавăн хыççăн ĕç проекчĕ туса хатĕрленĕ. Унта 8 миллион тенкĕлĕх ĕç туса ирттернĕ, подрядчик пулса «Водстрой» ПМК тăрăшать.

- **Пирĕн район питĕ çырма-çатраллă. Юхан шыв та самай. Пĕчĕккисенчен пуçласа Йăршу,Ункă евĕр вăрăммисем таранах. Анчах юхан шыва тасамарлăх та самай лекет. Тасатмалли сооруженисем ыррăн ĕçлеменнипе те вараланать-çке вăл.**

- Сооруженисем мĕнле ĕçленинчен вĕсем таса мар шыва епле тасатасси нумай килет. 39 сооружени (районта çавăн чухлĕ) урлă çулталăкра 1,5 миллион кубла метр таран таса мар шыв тухать. Чăнах та, сооруженисем пур енлĕ йĕркеллĕ ĕçлеççĕ тени тĕрĕс мар. Тасатмасăр юхан шыв лекекенни питĕ нумай. Тасамарлăх чылай чух нумай хваттерлĕ çуртсенчен тухать. Сооруженисене юсама çулсеренех укçа-тенкĕ уйăрнă. Пĕлтĕр Çĕнĕ Тутаркассинчине валли 200 пин тенкĕ тухса кайнă. Ишлейрине тата «Волга» санаторинне юсанă. Çапах та татса паман ыйтусем пĕрех çук мар. Акă талăкра 1100 кубла метр йышăнма пултаракан Кӳкеçри сооружени витĕр 1600 кубла метр ытла тухать. Унта пыракан таса мар шыва поселокри 27-мĕш професси училищин сооруженине памалла тăвас вариант пур, анчах вăл укçа-тенкĕпе çыхăннă. «Паха тĕрĕ» обществăн сооруженине туса пĕтерсен те самай лайăх пулĕччĕ.

Иртнĕ çул плотинасене юсама, çӳп-çап тăкмалли ятарлă ирĕк илнĕ вырăнсене хăтлăх кӳме те самай тăкакланă.

## ЛАМПĂНА ДЕМЕРКУРИЗАЦИЛЕМЕ КАЙСА ПАМАЛЛА

***Эпир килте «кăнтăрлахи лампăпа» усă куратпăр. Пĕр ик-виç эрне каялла вăл çунса кайрĕ. Эпĕ ăна пĕр вырăна пуçтарса хутăм, мĕншĕн тесен вăл лампăра ртуть пуррине аван пĕлетĕп. Мĕн тумалла ман унпа?***

**К.ИВАНОВА.**

Вулаканăн ыйтăвне хуравлама эпир «Районăн экологи хăрушсăрлăхĕн комитечĕ» муниципаллă учрежденин директорне Р.В.Данилова ыйтрăмăр. Акă мĕн хуравларĕ вăл:

- Лампăна Шупашкара, «Меркурий» наукăпа производство пĕрлешĕвĕ» тулли мар яваплă обществăна, кайса памалла. Унта ăна демеркуризацилеççĕ. Çав ĕçе пурнăçлани тӳлевсăр мар, 5 тенкĕ те 57 пус тăрать.

Бюджет организацийĕсенне пуçтарса илсе каяссине йĕркеленĕ, анчах уйрăм çынсен хăйсен кайса пама тивет.

## ЫРĂ ВĂРЛĂХРАН - ЫРĂ ÇИМĔÇ

Ача чухнехи пĕр самант аса килчĕ. Ытла пĕчĕкех те пулман та ĕнтĕ ун чух, анчах темшĕн айванланнă. Кĕпе чӳхеме кукамай колонка патне кăлармастчĕ. Çырмана яратчĕ. Унта вара пусă пурччĕ. Пĕррехинче йăмăкпа иксĕмĕр çырмана антăмăр та кĕпе кивме пуçларăмăр. Унтан кукамай та çитрĕ. Мухтас вырăнне пире ятласа тăкрĕ... Пĕлетĕр-и мĕншĕн? Çăл çывăхне тăрса кивнишĕн. Эпир çынсем ĕçме шыв унтан пĕрех ăсмасси пирки калани те айăпăмăра сирейменрĕ.

Тăван тавралăха вараласси çавăн пек пĕчĕк япаларан пуçланни пирки шухăшлатăп та, кукамай ун чухне тĕрĕсех ятланине ăнланатăп. Кашнине пĕчĕкрен ăнлантарса ӳстерсен, асслисем вара ачасемшĕн тĕслĕх пулсан çитĕнекен ăрăвăн ăшĕнче мĕн те пулин юлатех.

Ырă çимĕçрен - ырă вăрлăх теççĕ. Шăпах çавăн пек вăрлăх сарать те «Asio» экологи клубĕ. Вăл ăçта вырнаçни пирки çырма кирлĕ мар пуль тетĕп, мĕншĕн тесен «Asio» тенине илтмен-пĕлмен çын районта çук та пуль. Хыпса-çунса тăракан чун-чĕреллĕ А.А. Яковлев ертӳçĕ çамрăк экологсен йышне сарса пыма тăрăшать. Аслине кура ачасем те çунатланса каяççĕ. Таçта та çитсе килеççĕ, тĕпчессине мала хураççĕ. Çут çанталăкăн çамрăк тусĕсем ăслăлăх ĕçĕсем те çыраççĕ.

Клуб тĕрлĕ мероприяти час-часах йĕркелет. Вĕсен «Экоша» куçăмсăр шкулĕ çĕннине чылай вĕрентет.

«Asio» çывăх вăхăтра ирттерме палăртнă мероприятисенчен пĕри вăл - çут çанталăка пĕлекенсен конкурсĕ. Унта кашни шкулах виçĕ ача хутшăнтарма пултарать.

**Сивĕ ир. Вăрманта тĕттĕм те шăп. Хыр йывăççисем юр кĕрĕкĕпе витĕннĕ. Чăрăш турраттисем мамăк алсиш тăхăннă. Тункатасем лапсăркка юр айĕнче тĕлĕреççĕ. Пĕр сас-чӳ те çук... Анчах сасартăк таçта инçетре, лăсăллă йывăççен чăтлăхĕнче, шăплăха сирсе усă сасăллă кайăк юрласа ячĕ. Çак сивĕре мĕнлескер савăнать-ши? Акă кайăксем хăйсем курăнчĕç: тĕрлĕ тĕспе çунакан чăн-чăн вут çутти тейĕн. Туратсем хушшинчен кăвак, сарă, хĕрлĕ тĕссем йăлтăртатаççĕ. Тĕлĕрекен вăрман та вĕсен сассипе ыйхăран вăранчĕ, хăйĕн тĕсне улăштарчĕ.**

**Эпир хамăр тăван киле, хулана, яла юратнă пекех кайăксем те хăйсем пурăнакан вырăна юратаççĕ. Хăшĕ-пĕрисем сивĕ çанталăкра та вăрмантан ниçта та каймаççĕ. Халĕ шăпах вĕсем çинчен каласа парасшăн.**

## *ХĂЙСЕМ ПУРĂНАКАН ВЫРĂНА ЮРАТАÇÇĔ*

**Хĕл çитнине систерекен.** Чи малтанхи çемçе юр ӳксенех пирĕн пата çĕпĕртен уйăпсем вĕçсе килеççĕ. Вĕсем йывăççемпе тĕмсен вăррисене çисе пурăнаççĕ. Вăхăт-вăхăт юр айне кĕрсе йĕр тăваççĕ. Йăмăх хĕрлĕ кăкăрĕ шурă юр çинче çав тери илемлĕн курăнать.

**Хаваслă юрăçă.** Кăсăясем пирĕн таврара çулталăкĕпех пурăнаççĕ. Ирсенче вĕсем чӳречерен шакканине тăтăшах курма пулать. Карăна уçатăн та сарă кăкăрлă, хура «галстуклă» кайăка асăрхатăн. Пичĕ шурă, пуçĕ çинче хура çĕлĕк. Хĕллехи вăхăтра кăсăясем яла, çынсем пурăнакан вырăна, вĕçсе килеççĕ. Пĕчĕк кайăка юр айĕнчен апат тупса çиме йывăр. Пулăшăр ăна, апат хурса парăр.

**Вăрман тухтăрĕ.** Вăрманăн хăйĕн тухтăрĕ пур. Улатакка вăл. Вăл йывăçа кăшлакан нăрăсене, личинкăсене тупса çиет.

**Акробат.** Улатакка вăрман тухтăрĕ пулсан, шăван кайăк - акробат. Вăл çăмăл, хăюллă, йывăç çинчен пуçне çӳлтен аялалла туса анать.

**Королек.** Çерçисен йышне кĕрекен пĕчĕк кайăк. Пĕр вырăнта çеккунт та тăмасть вăл. Турат çинчен турат çине сикет, йывăçăн кашни çурăкне тенĕ пек хăйĕн сăмсине чикет. Королек та вăрман санитарĕ. Вăл сиен кӳрекен хурт-кăпшанкăна шырать.

**В.МОСКОВКИН,**
**çут çанталăка юратакан.**

❂ Конкурссем

## ТИРПЕЙ-ИЛЕМ ЕНĔПЕ

Тавралăха тирпей-илем кӳрес, йывăççем лартас тĕллевпе ирттереççĕ теме пулать йăлана кĕнĕ çак конкурса. Кăçал та пулĕ вăл. Ăна Чр Министрсен Кабинечĕн ларăвĕнче çирĕплетнĕ. Республикăн Строительство, архитектура тата çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министерстви пĕлтернĕ тăрăх, ăмăрту май-август уйăхĕсенче пилĕк номинаципе иртмелле.

Конкурсра çĕнтерес тесен яла тирпей-илем кĕртнипе тата йывăç-тĕм лартнипе, цветниксемпе кану вырăнĕсене епле йĕркеленипе тупăшма пулать. Кунсăр пуçне организацисем хăйсем уйрăммăн конкурса хутшăнма пултараççĕ. Çĕнтерес тесен вĕсен хăйсен тавралли территорие тирпейлемелле, йывăç-тĕм лартса илем кӳмелле. Социаллă сфера учрежденийĕсем те хăйсен хушшинче ăмăртĕç. Условийĕ - çавнашкалах. Ун пек майпах урамсене те хаклĕç.

Республикăри конкурсран юлас мар тесен район тата хула администрацийĕсен ĕç ушкăнĕсем йĕркелемелле, унтисем вырăна çитсе хаклĕç. Чи лайăххисене республикăри конкурса явăçтарма заявка тăратасси те вĕсен ĕçĕ пулĕ.

## СЫРĂШ ТĂВАССИПЕ

Ку конкурса хутшăнас тесен темех тумалла та мар. Сырăш ăсталаса çакни тата унта тăтăшах апат хурса пани вара - тĕп услови. Анчах ăна йывăç çине пăталама кирлĕ мар. Апла хăтлансан патак икĕ вĕçлĕ тенĕ пек пулса тухĕ: кайăксене валли сырăш пурри аван та, йывăçсене сиен кӳрĕн.

«Asio» экологи клубĕ ирттерекен çав конкурс апрелĕн пĕрремĕшĕччен пырать. Апла пулсан вăхăт пур-ха: хутшăнма та, кайăксене выçса вилесрен пулăшма та.

**Страницăна В.ИВАНОВА хатĕрленĕ.**

В.ЛЕВУКОВ

## ПУРНĂÇ КУКРИ

КАЛАВ

(Малалли. Пуçламăшĕ 8-12 номерсенче.)

Урамран ăна, пĕчĕк ачипе нушана кĕрсе ӳкнĕскере, шеллесе хăйĕн патне йышăнни çинчен часчасах аса илтерме пуçларĕ:

- Пархатарсăр эс, хăвна ыр тунине питĕ хытă мантăн.

Тепрехинче ĕçме ертсе килнĕ юлташĕсем умĕнче:

- Ак çак хĕрарăм - ман арăм, анчах вăл манпа çывăрмасть,- тесе, пӳрнипе ун çине тĕллесе, намăслантарчĕ. Юлташĕсенчен вăтанмасăрах Наçтука тыллама тытăнчĕ.

- Ачуна çавăт та тухса кай ман кил-çуртран! - кăшкăрчĕ çиллессĕн.

- Ăнлан-ха, Микуль, ăçта тухса кайăп-ши эп тăваттăри ачапа каçа хирĕç? - ӳкĕтлесшĕн пулчĕ Наçтук. Çемьери лару-тăру сисĕнмеллех çивĕчленнине кура килнĕ хăнасем тухса кайрĕç. Ӳсĕрĕлнĕ Микуль пĕччен хĕрарăм умĕнче татах паттăрланса кайрĕ. Куçĕсем вут пек çунчĕç унăн, вĕçĕхĕррисĕр çухăрчĕ, веçех ухмаха ерсе кайрĕ тейĕн. Наçтук ним те шарламарĕ, чăтрĕ йăлтах упăшки мăшкăлланине. Микуль епле кĕсйинчен пистолет туртса кăларнине те сиссе юлаймарĕ, унпа куçĕ умĕнче хăмсарнинчен шутсăр хăраса ӳкрĕ. Унччен те пулмарĕ, Наçтука пуçĕнчен вирлĕн сулса çапрĕ пистолечĕпе Микуль. Хĕрарăм ахлатса урайне тĕшĕрĕлсе анчĕ. Хăйĕн пӳлĕмĕнчен тухнă Оленька, амăшне çапса ӳкернине пĕтĕмпех курса тăнăскер, çари çухăрса ячĕ. Микуль ăна та лектерес шутпа аллине çĕкленĕччĕ, анчах Наçтук туххăмрах сиксе тăчĕ те ун аллинчен ярса тытрĕ:

- Ан çапнă пултăр хĕрĕме! - хăюлланса чарчĕ ăна вăл.

Хăйне хирĕç тăма хăйнăран, чăтăмлă хĕрарăма ниепле те парăнтарайманран, Микуль веçех çынлăхран тухрĕ, урăм-сурăм пистолечĕпе хăмсарчĕ:

- Эп сана кăтартап ман патра мĕнле «бесплат» пурăнмаллине! Ухмах тесе шутлатни мана, еплерех вăл ăшă йăваран тухасшăн мар?! - тулхăрчĕ Микуль пĕр чарăнми. Унччен те пулмарĕ, çенĕке тухрĕ те икĕ пуртă йăтса кĕчĕ. Пĕрне кĕнĕ-кĕмен шап-шурă пӳрт пĕрени çине пĕтĕм вăйран эхлетсе çапса лартрĕ, тепринпе Наçтук çине хăмсарса пычĕ.

- Эпĕ сана кăтартап, мана ухмаха хурса пурăнма! Кăтартап раксем ăçта хĕл каçнине! Ăшă пӳртре, çемçе вырăн çинче упăшкапа çывăрма пĕлместĕн пулсан, урамра йытă пек çывăрса пăх! Тухса кай ман çуртран, унсăрăн пуçна касса тататăп! - сурчăкне сирпĕтсе, пурттипе хăлаçланса, урса кайнă вăкăр пек мĕкĕрчĕ вăл.

- Лăплан, Микуль, тархасшăн, лăплан,- макра-макра ӳкĕтлерĕ упăшкине Наçтук. - Эпир каятпăр, халех тухса каятпăр.

Пӳлĕмрен пӳлĕме çиллине шăнараймасăр таплаттарса çӳрерĕ Микуль, Наçтукпа хĕрĕн нумай мар япалисене пĕр купана пуçтарса ывăтрĕ.

- Пурлăху та сан пĕр çăк, çурăм хыçне çакмалăх кăна,- кулчĕ вăл йĕплесе. Каллех хăйĕн пуян пурлăхĕпе вĕçкĕнленме пуçларĕ.

Кăштахран:

- Юрĕ, кĕçĕрлĕхе çĕр каçăр. Ыранран шăршу-маршу та ан пултăр ман килте,- терĕ вăл кĕтмен çĕртен шухăш-кăмăлне улăштарса.

Тепĕр кунне Наçтук яланхи пекех ирех тăчĕ те сĕтел çине çиме хатĕрлерĕ. Микуль, арăмĕ çине куç айĕн пăхкаласа, сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ. Упăшкин çилли самаях сĕвĕрĕлнине кура, Наçтук хуллен кăна сăмах хускатрĕ:

- Микуль, тархасшăн, ан хăвала пире урама. Сансăр пуçне пирĕн никам та çук-çке. Ирĕк парсам пурăнма сан патра çуллаччен. Пĕр пĕчĕк кĕтес пулсан çитет пире, уншăн укçа тӳлесе тăрăп,- терĕ вăл упăшкин куçĕнчен тилмĕрсе пăхса.

Пĕр самант ĕнсине хыçкаласа шутлам пек тунă хыççăн:

- Юрĕ, пурăн ачупа унăн пӳлĕмĕнче. Укçа кирлĕ мар. Эсĕ пурăн хăвăн пурнăçупа, эпĕ хамăннипе,- пулчĕ хирĕç ун хуравĕ.

Хăш чухне çын-çынах иккен Микуль, ăнланать те çын нушине, калаçма та пулать çын евĕрлĕ унпа, анчах эрех кӳпсе тултарнă чухне вуçех ухмаха ерсе каять, никама та итлесшĕн мар. Упăшки ĕçке пула ăсне çухатнине чухлать Наçтук, анчах хальлĕхе ăна мĕнле пулăшу сĕнмеллине пĕлмест. «Ятарласах сипленме каймалла» тесен, «Эпĕ алкоголик мар», тесе сиввĕн пăхать леш ун çине.

Пĕр çуртра мăшăрсене пĕрпĕринпе калаçмасăр ют çын пек пурăнмашкăн питĕ йывăр. Эрне иртсе кайрĕ пĕр ăнланмалла мар пурнăç. Наçтук кашни кун яланхи йĕркепе ĕçе, ĕçрен ача садне, унтан хĕрĕпе чун йышăнман кил-çурта хыпаланса таврăнчĕ. Микульрен каярах юлса таврăнсан, леш хаяррăн, сивĕ куçпа кĕтсе илесси паллах.Каяс та мар унта, анчах ниçта, никам патне урăх кайма çук.Мĕн тесен те Микуль официаллă упăшка-ха хальлĕхе.

(Малалли пулать.)

## ИКĔ ÇЫННА ВĔЛЕРНĔ

**Статистика палăртнă тăрăх, кирек епле преступление те нумай чухне пуçа хаяр шĕвекпе минретнисем тăваççĕ.**

2005 çула кĕни уйăх çеç иртрĕ пулин те, районта çынна йывăр сусăрлатнă, вĕлернĕ тĕслĕхсем тупăнчĕç те ĕнтĕ. Шел, çакăн пек пăтăрмахсем общество куçĕ умĕнчех, халăх хушшинчех пулса иртеççĕ-çке.

Кӳкеçри «Марпосадская» урамра пурăннă Н.Васильев çур ĕмĕр урлă каçнă, йĕркеллĕ пурнăç çулĕ тупайман. Çак çамрăк мар инвалид черккене алăран яман. Ун пек чухне юлташсем те самантрах тупăнаççĕ тата.

- Унпа юнашар, хваттер йышăнса Тутарстанра çуралса ӳснĕ А.Сагдеев пурăннă,- терĕ çак ĕçпе следстви ирттерекен районти прокуратура следователĕ Р.Родионов. - Иртнĕ эрнере Н.Васильев пенси илнĕ. Кăна пĕлсе тăнă А.Сагдеев ун патне пырать. Эрех ĕçнĕ, çитмен. Кил хуçинчен чылай çамрăк арçын унран укçа ыйтнă, лешĕ паман. Çакăншăн тарăхнă хăна алла тимĕр кĕреçе илет те ăна çапса ӳкерет, вилмеллех хĕнет. Вырăн çине вырттарать, кĕпи-йĕмне хывса кăмакара çунтарать, хăй çине бензин сапать, чĕртсе ярать.

Халĕ ку ĕçпе следстви пырать-ха, преступленийĕн нумай енне тĕплĕн тĕпчесе пĕлмелле.

**Прокуратурăра** Д.Долгов следователь январĕн 18-мĕш каçхине Салапайкассинче пулса иртнĕ тепĕр инкекпе ĕçлет.

Ю.Хорасев та пурнăçра ырă çул шыраман. Çынпа хирĕçесси, çапăçасси çамрăклах йăлана кĕнĕ унăн. Çын вĕлернĕшĕн суд тенкелĕ çине ларнă, тĕрмене хупăннă. Решетке хыçĕнче хăйне йĕркеллĕрех тытнăран-ши вăхăтне икĕ çул майлă ларса çитереймен, иртнĕ çулхи июль уйăхĕнче ирĕке тухнă.

Урок пулман уншăн пралук хыçĕнче ирттернĕ çулсем. Вăл малтанхи пурнăçах килĕштернĕ, ĕçнĕ, чăркăшнă. Çак каç ун патне пынă Никифировпа та пĕр чĕлхе тупайман. Кил хуçи нумай шутласа тăман алла çĕçĕ тытнă та ăна вĕлерес тĕллевпех темиçе çĕртен çĕçĕпе чикнĕ, лешĕ çавăнтах вилсе кайнă.

Шел пулин, те çакăн пек тĕслĕхсем пирĕн районта час-часах пулма пуçларĕç. Иртнĕ çул та пулнăччĕ. Хамăр урапа утсах инкек патне пыратпăр, чун кăшт та сисмест-ши вара.

П.ПАВЛОВ.

**Уважаемые арендаторы земельных участков, находящихся на территории Чебоксарского района!**

Администрация Чебоксарского района доводит до Вашего сведения, что с 1 января 2005 года изменены коды бюджетной классификации для перечисления арендной платы:

| 2004 год | 2005 год | |
|---|---|---|
| 2010201 | **303 1 11 05011 03 0000 120** | Арендная плата и поступления от продажи права на заключение договоров аренды **за земли сельскохозяйственного назначения** до разграничения государственной собственности на землю |
| 2010202 | **303 1 11 05012 03 0000 120** | Арендная плата и поступления от продажи права на заключение договоров аренды **за земли городских поселений** до разграничения государственной собственности на землю |
| 2010263 | **303 1 11 05013 03 0000 120** | Арендная плата и поступления от продажи права на заключение договоров аренды **за земли сельских поселений** до разграничения государственной собственности на землю |
| 2010203 | **303 1 11 05014 03 0000 120** | Арендная плата и поступления от продажи права на заключение договоров аренды **за другие земли несельскохозяйственного назначения** до разграничения государственной собственности на землю |
| - | **303 1 11 05015 03 0000 120** | Арендная плата и поступления от продажи права на заключение договоров аренды **за земли**, расположенные в границах муниципальных образований и **предназначенные для целей жилищного строительства** до разграничения государственной собственности на землю |

Справки по телефонам: ***2-15-92, 2-50-77*** или по адресу: **Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, д. 15** (каб. № 20).

## О выполнении прогнозного плана (программы) приватизации муниципального имущества за 2004 год

В соответствии с Прогнозным планом (Программой) приватизации муниципального имущества Чебоксарского района на IV квартал 2003 года и на 2004 год, утвержденным решением Собрания депутатов Чебоксарского района от 17.10.2003 года, в 2004 году подлежали приватизации 8 объектов недвижимости.

Чебоксарским районным комитетом по управлению имуществом по состоянию на 01.01.2005 г. проданы на аукционе 6 объектов недвижимости:

объекты Чебоксарского районного кинозрелищного предприятия (фильмохранилище, гаражный бокс №1, новая контора, здание конторы, гаражный бокс №2), расположенные по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, пос.Кугеси, пер. Аптечный, д.2. Продажная цена объектов 156875 (сто пятьдесят шесть тысяч восемьсот семьдесят пять) рублей. Из вырученной суммы 107299 (сто семь тысяч двести девяносто девять) рублей 13 копеек было направлено на погашение кредиторской задолженности Чебоксарского районнного кинозрелищного предприятия по исполнительным листам, выданным судебным участком №2 Чебоксарского района ЧР, а 49575 (сорок девять тысяч пятьсот семьдесят пять) рублей 87 копеек было направлено в бюджет района;

здание Чигирьской начальной общеобразовательной школы, расположенное по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д.Большой Чигирь, ул.Школьная, д.27, вырученная сумма в размере 30450 (тридцать тысяч четыреста пятьдесят) рублей была перечислена в бюджет района;

автотранспортное средство УАЗ-3962,1994 года выпуска, вырученная сумма в размере 8820 (восемь тысяч восемьсот двадцать) рублей направлена в бюджет района.

Всего за 2004 год в бюджет района перечислены средства от приватизации муниципального имущества на сумму 89 тыс. рублей.

В соответствии со статьей 31 ЗК РФ предоставляется в долгосрочную аренду земельный участок площадью 0,15 га, расположенный в д.Новые Тренькасы по ул.12-ой Пятилетки, д.7 «б», для индивидуального жилищного строительства с предварительным проведением работ по разборке незавершенного строительства «Дома культуры на 300 мест» и рекультивации данного земельного участка.

11 февраля в д.Вурманкасы состоится концерт Шоркинского фольклорного ансамбля со съемкой Чувашского телевидения. Спонсор - Ишлейский кирпичный завод. Начало - 19 часов 30 мин.

Собственник земельной доли В.Г.Семенов сообщает о намерении выделиться из земель с/х назначения на территории землепользования СХПК «Атăл» в счет земельной доли установленного размера. Выделяемый участок не превышает среднекадастровую оценку, поэтому компенсация не предусматривается. Свои возражения направить письменно в адрес администрации Чебоксарского района, п. Кугеси, ул. Шоссейная, 15.

Продается корова 4-го отела. Т.:72-60-84 или 89033793911

Утерянное свидетельство о праве на льготы А № 816466, выданное на имя Е.И.Федорова, считать недействительным.

Кузовной ремонт и покраска автомашин, ул.Шоршелская, д.2. Тел.: 2-50-62.

Мы, Иванов Виталий Рудольфович, собственник земельных долей и Степанов Анатолий Михайлович, действующий по доверенности от имени собственников земельных долей, сообщаем о своем намерении выделить земельные участки из земель с/х назначения на территории землепользования СХПК «Атăл» Чебоксарского района в счет земельных долей площадью 154 га в поле №№1, 2, 6, 9 первого севооборота, в поле № 1 второго севооборота и в поле № 4 из третьего севооборота для организации КФХ.

Обязуемся выплатить компенсацию остальным участникам долевой собственности земельных участков на территории СХПК «Атăл» после завершения работ по оценке рыночной стоимости испрашиваемых земельных участков.

Свои возражения просим направить в месячный срок в правление СХПК «Атăл» Чебоксарского района.

Продаю шифер, цемент, рубероид, мох, керамблок, оцинковка с доставкой и без выходных ( Ишлеи). Т.: 3-15-85.

Продаю колодезные кольца, крышки, керамзитобетонные блоки, цемент, шифер, рубероид. Доставка. Телефоны: 31-5-27; 44-02-90.

Продается кирпич утолщенный. Цена ниже заводских (1000 шт. - 3350 руб.). Т.: 2-10-31.

Куплю корову. Т.: 35-3-51.

Познакомлюсь с женщиной до 50 лет для совместного проживания и ведения домашнего хозяйства. Военный , пенсионер, разведен. Д. Самуково, д. 60., Петров Ростислав Артемович. Жду письма.

ООО «Девиз» сообщает о ликвидации. С претензиями обращаться по адресу: Чебоксарский район, п. Кугеси, ул. Лесная - 10. Т.: 89030666808.

ООО «Межевик» выполнит межевание, установление границ земельного участка, топографическую съемку. Адрес: **п. Кугеси, ул Советская, дом 50** (в здании почты, 3 эт.). Т.: ***2-26-10.***

❂ ❂ ❂

«Кӳкеçри издательство çурчĕ» ПУП администрацийĕ, профсоюз комитечĕ, ĕç коллективĕ район хаçатĕнче ĕçленĕ

**Федор Кириллович КОМАРОВ**

чирленĕ хыççăн вилнĕ пирки çемйипе пĕрле чĕререн хурланнине пĕлтереççĕ.

МУЗ «Чебоксарская центральная районная больница» выражает глубокое соболезнование медсестре гинекологического отделения Комаровой Ирине Константиновне в связи со смертью мужа

**Федора Кирилловича КОМАРОВА.**

Çатра-Хочехматри шкул коллективĕ 7-мĕш класра вĕреннĕ

**Марина КАЛИШОВА**

сарăмсăр вилнĕ пирки тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланнине пĕлтерет.

Гл. редактор В.Т.СОРОКИН

ТĂВАН ЕН («КРАЙ РОДНОЙ») Чебоксарская районная газета

Учредители: ГУП "Кугесьский издательский дом", Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики

Газета зарегистрирована в Приволжском окружном межрегиональном территориальном управлении МПТР РФ 17 декабря 2002 г. ПИ №18-1109

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор - 2-12-61, ответственный секретарь, фотокорреспондент - 2-13-80, отдел сельского хозяйства - 2-21-88, компьютерный отдел - 2-12-59, отдел писем - 2-21-88, бухгалтерия - 2-12-66. E-mail: gazeta@chebs.cap.ru

Номер набран, сверстан и отпечатан в ГУП "КуИД". Тел.Ёфакс: (8240) 2-13-83. E-mail: prinĕ@chebs.cap.ru

Дежурный по номеру: Г.А.ЕГОРОВ.

Печать офсетная. Объем 1,0 печ. лист. Номер подписан в печать: 8.02.2005 г. в 16 час. 00 мин. Заказ №208 . Тираж 1542. Индекс газеты - 54820.